Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

29 (7454) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи апрелĕн (ака) 11-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотисене тивĕçнĕ

Район администрацийĕн экономика, вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕсем, халăх вĕрентĕвĕн профсоюз организацийĕн районти канашĕ, Е. Андреев яч. хис., «Свобода», Чапаев яч. хис. хуçалăхсем, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики, Муркашри кирпĕч завочĕ, Муркаш райповĕн канашĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 2007 çулхи мартăн 30-мĕшĕнчи 132 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Вырăнти самоуправлени органĕсенче нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Тамара Ананьевна АНТОНОВАНА**, район администрацийĕн экономика пайĕн ертсе пыракан специалистне.

2. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе тунă çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Лидия Евгеньевна КАРПОВАНА**, Москакасси шкулĕнчи вырăс чĕлхипе литературин учительне;

– **Владимир Гурьевич ЛЬВОВА**, Муркаш шкулĕн пурнăç хăрушсăрлăх тытăмĕсен преподаватель-йĕркелÿçине;

– **Нина Михайловна ТЮРИНАНА**, Шурча шкулĕн чăваш чĕлхипе литературин учительне;

– **Людмила Аркадьевна ФЕДОРОВАНА**, Тойкилтĕ шкулĕн математика учительне.

3. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Люба Ефимовна МУЗЫКОВАНА**, «Березка» ача сачĕн кĕçĕн воспитательне.

4. Ял хуçалăх производствинче нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Василий Петрович ВОЛКОВА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин электромонтерне;

– **Раиса Андреевна ЕФРЕМОВАНА**, «Свобода» хуçалăхĕн рабочине;

– **Елена Валентиновна СКВОРЦОВАНА**, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхĕн сысна пăхаканне;

– **Любовь Кирилловна СТРОГОВАНА**, Чапаев яч. хис. хуçалăхĕн сысна пăхаканне;

– **Галина Максимовна ТОЛСТОВАНА**, ĕç ветеранне;

– **Галина Федоровна ФЕДОРОВАНА**, Чапаев яч. хис. хуçалăхĕн бухгалтерне.

5. Районăн пурнăçпа экономика аталанăвне тÿпе хывнăшăн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн – **Алексей Петрович СКВОРЦОВА**, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йĕркелÿ пайĕн пуçлăхне.

6. Промышленноçра нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Николай Иванович АЛЕКСЕЕВА**, Муркашри кирпĕч завочĕн бульдозер машинистне;

– **Алексей Николаевич МИХАЙЛОВА**, Муркашри кирпĕч завочĕн инженер-энергетикне.

7. Потребительсен кооперацийĕнче нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Магдалина Васильевна ЕФРЕМОВАНА**, «Моргауши-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Лантăшри çăкăр пекарнинчи çăкăр пĕçерекенне.

**Уйăхлăх**

## Тавралăх илемлĕрех пултăр

Район администрацийĕн пуçлăхĕн мартăн 23-мĕшĕнчи 128 № йышăнăвĕпе районта апрелĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса майăн 15-мĕшĕччен йывăçсем лартассипе тата тавралăха тирпей-илем кĕртессипе уйăхлăх ирттерме йышăннă.

Район администрацийĕн ял хуçалăх управленийĕн ял хуçалăх предприятийĕсемпе, организацисемпе тата ял тăрăхĕсен администрацийĕсемпе килĕшсе татăлса туса ирттермелли ĕçсен калăпăшне палăртмалла, уйрăмах эрозипе кĕрешес ĕçсем çине тимлĕх уйăрмалла. Кунпа пĕрлех урамсемпе ялсене тирпей-илем кĕртес ыйтусене айккине хăвармалла мар.

Çут çанталăк сыхлавĕн тĕп специалистне Муркаш вăрман хуçалăхĕпе, Ильинка тата Малиновка лесничествисемпе пĕрле лартса хăвармалли материалсемпе тивĕçтерме хушнă.

Ку йышăну мĕнле пурнăçланнишĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.Г. Никитин яваплă пулса тăрать.

**Республикăра**

## Н.Федоров: “Вунă çулта Чăваш Ен историйĕнче тунă чухлĕ хваттер çĕклĕпĕр”

**Çирĕп никĕс хывмасăр çурт-йĕр çĕкленеймест, чăтса та лараймасть. Шăпах ĕнтĕ хваттер тăвакансене строительство материалĕсем нумай кирлĕ, вĕсен пахалăхĕ те лайăх пулмалла. Унсăрăн мал ĕмĕтпе ĕçлесе пурăнма çук. Чăваш Республики кашни çын пуçне хваттер тăвас енĕпе Раççейре малтисен вырăнне тухнă. Çитес çулсенче çак кăтарту нумай-нумай хут ÿсмелле. Тĕллеве пурнăçлама чи малтан строительство материалĕсем çителĕклĕ тата çирĕп пулмалла. Çĕнĕ Шупашкар ку тĕлĕшпе чăннипех строительство индустрийĕн тĕп хули шутланать, унти предприятисем строительство материалĕсем кăлараççĕ. Иртнĕ кĕçнерни кун Николай Федоров çав предприятисенче пулчĕ, стройиндустрин паянхи лару-тăрăвĕпе, малашне пурнăçламалли майсемпе тĕплĕн паллашрĕ.**

Республика пуçлăхĕ малтанах “Çĕнĕ Шупашкарти çурт-йĕр комбиначĕ” АУОн цехĕсене çитсе курчĕ, ертÿçĕсемпе, специалистсемпе тата рабочисемпе тĕл пулса калаçрĕ. Предприяти «Атăл» строительство корпорацийĕн тытăмне кĕрет, строительство материалĕсем хатĕрлекен пысăк комплекс пулмалла.

“Атăл” строительство корпорацийĕн” тĕп ертÿçи Сергей Терентьев çапла пĕлтерчĕ: предприяти нумай хваттерлĕ çуртсен çĕнĕ тĕсĕсене туса хатĕрлет, кашни проект Европа шайĕнче тата хăйне евĕр.

Директорсен канашĕн ертÿçи Владимир Филатов каланă тăрăх, 2007-2009 çулсенче предприятире 2 миллиард тенкĕлĕх çĕнĕ хваттерсем ĕçе кĕртмелле: çав шутра производство хăвачĕсене ÿстернисĕр пуçне çĕнĕ проектсем ĕçе кĕртесси те.

“Мĕншĕн-ха эпир паян çакăнта килтĕмĕр, мĕнле шанăçпа çÿретпĕр, – терĕ Президент комбинат ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă хыççăн. – Эсир пĕлетĕр ĕнтĕ, предприяти нумай йывăрлăха тÿссе ирттерчĕ. Малтанах кунта Францин “SARET” фирмин технологине вырнаçтарнă. Унпа халиччен тытăнса пурăнма пултарнă. Анчах йывăр условисене, саккассем çуккине пула комбинат панкрута тухнă. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче вара тĕнче килĕшĕвне алă пуснă. Халĕ комбинат панкрутра мар ĕнтĕ. Унтан та ытларах, предприяти малашлăхлă инвесторсем тупнă, вĕсем рынока тата комбинат ĕçне тарăннăн тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн Финляндин “Элематик” фирминчен хальхи чи паха оборудовани туяннă, вăл кĕçех килсе çитмелле. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле завод проектпа палăртнă шайра ĕçлеме тытăнмалла. Малтан производство хăвачĕ çулталăкра 150 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр тумалăх пулнă, раштавра çак кăтарту 300 пин тăваткал метра çитмелле. Строительство хăй хаклăхĕ 15 процент чакать. Ку комбинатшăн та, Çĕнĕ Шупашкаршăн та, Чăваш Еншĕн те, ытти регионшăн та питĕ кирлĕ тата çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ çитĕнÿ. 300 пин тăваткал метрлăх строительство материалĕсемпе комбинат Чăваш Республикине те, ытти региона та тивĕçтерме пултарать. Кăçал çу уйăхĕнче тĕрлĕ регион представителĕсем, кĕпĕрнаттăрсем те предприяти проекчĕсене презентацилеме хутшăнĕç. Палăртнине пурнăçа кĕртсен комбинат Атăлçи округĕнче чăннипех малти вырăнсенчен пĕрне йышăнмалла. Хальхи вăхăтра производство технологийĕсене тĕпрен çĕнетсе лайăхлатас ĕçсем пыраççĕ. Çирĕппĕнех çапла шантарса калатăп: Çĕнĕ Шупашкар çурт-йĕр комбинатне çĕнетсе эпир чылай пахарах, вăйлăрах тата хальхи саманана тивĕçлĕ шайра пулăпăр”.

“Оптима” ОООра Н.В. Федоров строительство хăвăртлăхне ÿстерме пулăшакан технологисемпе паллашрĕ. Кунти специалистсем строительствăра хальхи вăхăтра усă куракан паха материалсемпе (ăшă тытакан) сахал хутлă çуртсем çĕклеççĕ. Проект хăвачĕ – çулталăкра 100 пин тăваткал метр. Çурт-йĕр конструкцийĕсене завод условийĕсенчех, кĕске вăхăтра туса хатĕрлеççĕ, пĕтĕм комплекта строительство вырăнне илсе пыраççĕ, йывăр техникăпа усă курмасăр 3-5 кун хушшинче пухаççĕ. Ун пек çуртсем çитес вăхăтра Çĕнĕ Шупашкарпа Шупашкар хушшинче ÿссе ларĕç. Кунсăр пуçне “Оптима” Шупашкар районĕнчи Çĕньял çывăхĕнче сахал хутлă çуртсен микрорайонне тăвать. **(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Суту-илÿ ыйтăвĕсемпе**

## Магазин алăкĕсене яриех уçрĕ

Иртнĕ эрне кун Муркаш райповĕнче ĕçлекенсемшĕн тата Муркашра пурăнакансемшĕн акă мĕнпе асра юлчĕ. Муркашри универмаг çуртĕнче самообслуживани йĕркипе ĕçлекен апат-çимĕç магазинĕ уçăлчĕ. Кун пек магазин асăннă райпора пĕрремĕш пулчĕ. Районта вара тавар туянакансемшĕн питĕ меллĕ çак йĕркепе иртнĕ çулсенчех ĕçлеме пуçланă. Паянхи куна Мăн Сĕнтĕр райповĕнче самообслуживани йĕркипе 4 суту-илÿ предприятийĕ ĕçлет.



Магазина уçма халăх йышлăн пуçтарăнчĕ. Муркашсене çак паллă кунпа саламлама килнĕ Чăвашпотребсоюз Канашĕн председателĕ В. М. Павлов хăйĕн сăмахĕнче пирĕн районти икĕ райпо та республикăра çеç мар, Раççей шайĕнче те малти вырăнсене йышăннине палăртрĕ.

Валерий Михайлович сăмахĕсене çак тĕслĕхсем татах та уçăмлатаççĕ. Кăçалхи 3 уйăхра та районти суту-илÿ ĕченĕсем пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен çитĕнÿллĕрех вăй хунă: таварçаврăнăш планне пĕтĕмпе 90577,2 пин тенкĕлĕх пурнăçланă. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 29,1 процент ытларах. Муркаш райповĕн тÿпи вара çакăнта 44836,6 (133,8 процент) тенкĕпе танлашать, Мăн Сĕнтĕр райповĕн – 27335 (124 процент) тенкĕпе.

Обществăлла апатлану предприятийĕсем те çитĕнÿ çулĕпе малалах каяççĕ. Пĕлтĕрхи виçĕ уйăхринчен 85, 8 процент чухлĕ пысăкрах кăтарту вĕсен е 10001 пин тенкĕлĕх пурнăçланă палăртнине. Муркашсем иртнĕ çулхинчен 28,8 (4232 пин тенкĕлĕх), Мăнсĕнтĕрсем 7,3 (5641 пин тенкĕлĕх) процент чухлĕ ăнăçлăрах ĕçленĕ.

-Пĕтĕмĕшле самообслуживани йĕркипе ĕçлекен кăçал уçăлакан республикăри 31-мĕш магазин ку. Иртнĕ çул вара вĕсене эпир пурĕ 28 уçнă, - сăмаха малалла тăсрĕ Валерий Михайлович. Яланхи пекех малта пулăр. Муркашра, районта пурăнакансене тавар туянмалли условисем лайăхланнă ятпа саламлатăп.

Чăвашпотребсоюз Канашĕн ертÿçин сăмахĕсем пурнăçланасси пирки Муркаш райпо Канашĕн ертÿçи Б. В. Андреев пĕрре те иккĕленмест. Çакна валли кунта пур условисене те пăхса хунă. Чи малтанах магазинта тавар ассортименчĕ çав тери пуян пулни, çакă кулленхи ÿкерчĕк пулассине палăртрĕ. Кулленех кунта тавар туянакансемшĕн çăмăллăх пур. Вĕсем дисконтлă карта (вăл 50 тенкĕ çеç тăрать) туянма пултараççĕ. Унăн хуçисем вара пĕтĕм тавар хакĕнчен 3 процент чухлĕ йÿнĕрех тÿлеççĕ. Борис Васильевич каланă тăрăх, пĕрмаях тавар кунта туянакансемшĕн çак çăмăллăх пыра-киле 5-10 процентпа танлашмалла. Магазинта видеосăнав пулать. Райпо Канашĕн ертÿçи çавăн пекех асăннă магазин компьютер системипе ĕçлекен районти пĕрремĕш магазин пулнине палăртрĕ.

Сăмах май çакна палăртмалла. Магазина хута яма юсав ĕçĕсене 700 пин тенкĕлĕх пурнăçланă. Тĕрлĕ оборудовани 800 пин тенкĕлĕх туяннă.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А. Н. Иванов райпо çакăн пек магазин уçнине шăпах тавар туянакан куçĕпе хакларĕ:




– Самообслуживани йĕркипе ĕçлекен магазин уçни чи малтанах тавар туянакана хисепленине пĕлтерет, мĕншĕн тесен кунта тавара пăхса суйласа илме пулать. Кирлĕ тавар пирки сутуçăран тĕплĕнрех ыйтса пĕлме май пур. Тепĕр енчен, çакă тавар туянакансен ыйтăвне тивĕçтерессин культура шайĕ ÿсни çинчен калать, - терĕ вăл. – Суту-илÿ ĕçне дисконтлă система кĕртни кунта тавар туянакансен йышĕ ÿсесси пирки шантарать.

Акă, хĕрлĕ хăйăва касма та вăхăт. Магазина кĕрсен халь çеç каланă сăмахсем ахальтен пулманнине кашниех хăй куçĕпе курса ĕненчĕ. Ассортимент хулари магазинсенчен пĕрре те кая мар.

Çак кун халăх татăлмарĕ кунтан. Никам та таварсăр тухмарĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Сăн ÿкерчĕксенче: магазин уçăлнă самантсем.**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**

**Конкурс**

## Пĕчĕк предпринимательство предприятийĕсем валли

Республикăра пĕчĕк предпринимательствăна аталантарас тĕллевпе пысăк квалификациллĕ топ-менеджерсем хатĕрлессипе тÿлевсĕр вĕренме конкурс ирттереççĕ. Вăл 2007 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕччен пырать. Вĕренÿ тапхăрĕ – 2007 çулхи апрельтен тытăнса октябрьччен. Занятисем икĕ эрнере пĕр хут шăмат кунсенче 10-14 сехетсенче республикăри бизнес-инкубаторта иртеççĕ. Адресĕ: Шупашкар хули, Ленин проспекчĕ, 12 Б çурт, 4-мĕш хут.

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*



Юратнă та хисеплĕ мăшăра, аттене, асаттене, кукаçие, хуньăма, хăтана, çывăх тăванăмăра – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Федот Васильевич ВАСИЛЬЕВА** 80 çул тултарнă ятпа саламлатпăр.

Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул. Ĕмĕрÿ чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр. Мăшăру, ачусемпе мăнукусем, çывăх тăванусем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 5 ывăлĕ, 1 хĕрĕ, 5 кинĕ, 9 мăнукĕ, 1 кĕçĕн мăнукĕ, мĕн пур тăванĕсем.**